**Методическая разработка урока по чувашскому языку «Кĕркунне»**

***Автор-составитель: Тямакова Надежда Васильевна,***

***учитель чувашского языка***

В методической разработке представлен ход занятия с указанием поэтапной деятельности педагога и обучающихся.

**Задачи:**

1.Образовательные: систематизировать знания детей об осенних явлениях природы; способствовать развитию познавательного интереса;
2.Коррекционно-развивающие: развивать мышление, слуховое восприятие, внимание, память, сообразительность; активизировать и расширять словарный запас, развивать связную речь;
3.Воспитательные: воспитывать любовь к природе, экологическую культуру, учить видеть и чувствовать красоту осенней природы.
**Тип занятия:** обобщающее.
**Форма проведения:** урок
**Методы и приемы:**
- беседа;
- игра;
- работа с наглядностью;
- использование ИКТ;
- практическая наглядность;
- использование средств искусства.

**Воспитани тĕллевĕсем**: çут çанталăк илемне курма, юратма вĕрентесси, ăна сăнас тата упрас туйăма ӳстересси.

**Пĕлӳ тĕллевĕсем:** пурлă тата çуклă формăри глаголсемпе пуплевре тĕрĕс усă курма хăнăхтарасси, чĕр чун, кайăк, йывăç¸ ячĕсене çирĕплетсе хăварасси, кĕрхи вăрман çинчен çыхăнуллă каласа пама хăнăхтарасси**.**

**Аталану тĕллевĕсем**: çыхăнуллă пуплеве, шухăшлава, тимлĕхе, илемлĕ те тĕрĕс вулав хăнăхăвĕсене аталантарасси, сăмах йышне пуянлатасси.

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** компьютер, проектор, экран, темăпа çыхăннă слайдсем, кайăксен, йывăçсен, чĕр чунсен ӳкерчĕксем, «Кĕрхи вăрман» динамикăллă картина, карточкăсем.

**1.Класа урока хатĕрлени**

-Ырă кун, ачасем!
-Ырă кун, вĕрентекен!
-Пирĕн патра паян хăнасем пур, вĕсене те сывлăх сунар-ха.
-Ырă кун, хăнасем!
-Маттурсем! Шăппăн ларăр.

Шăппăн ларăр, шăппăн ларăр
Урок пырать ку класра
Эп çыратăп, эп вулатăп,
Калаçатăп чăвашла! **(1-мĕш слайд)**

**2.Чĕлхе зарядки**

-Ачасем, сирĕн паян кăмăлсем мĕнле?

Тархасшăн, хăвăр кăмăла çывăх смайликсене кăтартăр-ха мана

**(ачасем смайликсем кăтартаççĕ)**

-Пурин те кăмăл аван та савăк, апла пулсан вара урока пуçлар.

Чи малтанах урокра тĕрĕс те хитре калаçма чĕлхесене çемçетсе илер.

Çу-çу-çу, çумăр çу,
Ёи-ёи-ёи, çитрĕ кĕр,
Кӳ-кӳ-кӳ, кӳлĕ кур,
Ăн-ăн-ăн, урок ăн,
Ĕн-ĕн-ĕн, ырă шухăш сĕн. **(2-мĕш слайд)**

**3.Урок темине пĕлни**

-Маттурсем! Халĕ эсир паян урокра маттур ĕçлессе шанатăп.Урок темине халĕ эпĕ вуласа панă сăвă хыççăн пĕлĕпĕр.

Сарă çулçă ӳкет,
Сĕм вăрман çаралать
Пĕрмай çумăр çăвать
Ку хăçан пулать-ши? (**кĕркунне) (3-мĕш слайд)**

-халĕ сăвва тепĕр хут вуласа паратăп, эсир тимлĕн йĕрлесе пырăр (кăтартуллă вулав);

-учитель хыççăн вулама вĕренни;

-сăвва 2 ача саспа вулани;

-кĕркунне паллисене тупса вулани (**çулçă ӳкет, вăрман çаралать, çумăр çăвать); (4-мĕш слайд)**

-сăвăри глаголсене тупасси, хăш формăра пулнине калаттарасси, пурлă формăран çуклă форма тăвасси (**ӳкет-ӳкмест, çаралать-çаралмасть, çăвать-çумасть); (5-мĕш слайд)**

**4.Урок тĕллевĕсене палăртни**

-Маттурсем!Апла пулсан паян урокра мĕн çинчен калаçăпăр-ши**?(кĕркунне çинчен**)

-Тĕрĕс, паян урокра кĕркунне çинчен калаçăпăр.Паян урокра сирĕнпе пĕр асамлă та илемлĕ патшалăха çитсе курăпăр, малтанхи уроксенче чĕр чун, йывăç, кайăк ячĕсене аса илсе çирĕплетсе хăварăпăр, кĕрхи çанталăка сăнăпăр.

**5.Пуплев хăнăхтарăвĕ**

-Сăвăри сăмах майлашĕвĕсемпе паянхи урокра усă курма манса ан кайăр. Çапла вара, хамăр ырă шухăш-кăмăлпа эпир сирĕнпе çула тухăпăр. Асамлă кĕрхи патшалăха çитме çăмăлах мар, тĕрлĕ ĕçсем тума тивет.

-Чи малтан çак асамлă алăка уçас пулать. Вăл уçăлтăр тесен сирĕн кĕрхи çанталăка сăнласа памалла**. (6-мĕш слайд)**

**Ыйтусем:**

-Паян мĕнле çанталăк?

-Тӳпе мĕн тĕслĕ?

-Хĕвел пăхать-и?

-Çумăр çăвать-и?

-Мĕнле çил вĕрет?

-Йывăçсем мĕнле?

-Çынсем мĕнле тăхăнаççĕ?

-Кайăксем юрлаççĕ-и?

-Кайăксем ăçта вĕçсе кайнă?

-Сана кĕркунне килăшет-и?Мĕншĕн?

Кĕрхи çанталăк çинчен 2-3 ача çыхăнуллă каласа парать.

**6**.-Пирӗн алӑк уҫӑлчӗ те слайд ҫинче кӗрхи вӑрман курӑнса кайрӗ **(7-мӗш слайд**). Апла пулсан, эпир маттурсем, эпир пӗтӗм ыйту ҫине тӗрӗс хуравсем панӑ.

-Ачасем, кӗрхи вӑрман мӗнле-ши? Ку ыйтӑва хуравлама ҫак илемлӗ ҫулҫӑсем пулӑшӗҫ. Ҫулҫӑсем ҫине сӑмахсем ҫырнӑ. Кашни ушкӑнӑн предложение пӗрер сӑмах хушса ҫырмалла **(ачасене касса кӑларнӑ кӗрхи ҫулҫӑсем валеҫсе паратӑп).**

**(Кӗрхи вӑрман.Кӗрхи вӑрман илемлӗ. Кӗрхи вӑрман пуян. Кӗрхи вӑрман шӑп. Кӗрхи вӑрман тунсӑхлӑ.Кӗрхи вӑрман тискер**).

**(ачасем ҫырнӑ вӑхӑтра музыка).**

Ушкӑнсем хуравланӑ чух пурте тӑраҫҫӗ, капитан вуласа парать.

-Панӑ ӗҫе пурте маттур пурнӑҫларӑр. Эпир сирӗнпе пурте кӗрхи вӑрманта пулса курнӑ. Аса илер-ха унта сасӑсем нумай-и?

-Кӗрхи вӑрманта кайӑксен сассине илтме пулать-и?

-Кӗрхи вӑрманта мӗнле кайӑксене курма пулать-ши?

-Халӗ пире кроссворд панӑ **(8-мӗш слайд).** Ҫакӑнта кайӑк ячӗсем пытаннӑ. Мӗнле кайӑк ячӗсем-ши? Вырӑсла панӑ кайӑк ячӗсене чӑвашла куҫармалла.(**ҫерҫи-воробей, ула такка-дятел, кӑвакарчӑн-голубь, ула курак-ворона, чакак-сорока, кӑсӑя-синица, уйӑп-снегирь).**

Кайӑк ячӗсене вулатпӑр:

-1 ача-хор;

1 ача-хӗр ачасем, ар ҫын ачасем;

-1 ача-1 рет, 2 рет, 3 рет;

-1 ача – ахрӑм.

**7. Пӗтӗлетӳ туни:**

-Кусем пурте мӗнле кайӑксем-ши? (**хӗл каҫма юлакан кайӑксем) (9-мӗш слайд)**

-Часах хӗл кунӗсем ҫитӗҫ, кайӑксене пирӗн мӗнле пулӑшмалла? (Сырӑш туса ҫакмалла, унта ҫимелли хумалла).

-Сырӑшсене кампа тӑватӑр? Ӑҫта ҫакатӑр?

**8. Кану саманчӗ (10-мӗш слайд).**

Кайӑксем вӗҫнӗ-вӗҫнӗ,

Хир курнӑ та ларнӑ,

Каннӑ.Каллех вӗҫнӗ-вӗҫнӗ.

**9.Йывăçсем**.

-Ачасем, хĕллехи сивĕ кунсенче кайăксене мĕнсем хӳтĕ параççĕ?(**йывăçсем**).

-Халĕ эпĕ сире йывăç ӳкерчĕкĕсем валеçсе паратăп, сирĕн çак ӳкерчĕк тăрăх диалог тумалла. Мăшăрсемпе ĕçлетпĕр, пĕри ыйтать, тепри хуравлать.

**(Эсĕ ӳкерчĕк çинче мĕнле йывăç куратăн?Вăл мĕнле йывăç?Вăл ăçта ӳсет?Унăн мĕн пур?Çак йывăç сана килĕшет-и?)**

**10. Тискер чĕр чунсем (11-мĕш слайд)**

-Вăрман вăл йывăçсем, кайăксем терĕмĕр. Тата мĕн-ши вăл вăрман? Çак ыйтăва хуравлас тесен тупмалли юмахсен тупсăмне пĕлмелле.

1)Качăр-качăр!Кач-кач-кач!

Купăста çиет …(**мулкач**).

2)Тирĕп-чĕрĕп, тирĕп-чĕрĕп!

Хăратать мана ват …(**чĕрĕп).**

3)Чăх-чĕп тытма вăл вăрттăн килĕ

Çăмламас та чее … (**тилĕ).**

4)Сарă, тутлă пылпа

Килчĕ хăнана …(**упа**).

5)Хам йăвара эп-патша!

Мăйăр шĕкĕлчет …(**пакш**а).

6)Пысăк, мăйракаллă чĕр чун (**пăши**).

7)Сăрă, хаяр чĕр чун …(**кашкăр).**

Чĕр чун  ячĕсемпе предложенисем тумалла.

**11. Текстпа ĕçлени (12-мĕш слайд).**

Кĕркунне çитрĕ. Час-часах çумăр çăвать. Урамра сивĕ. Кĕрхи вăрман илемлĕ курăнать. Йывăç  çулçисем тĕрлĕ тĕслĕ. Ăвăс тата пилеш çулçисем хĕрлĕ.Юман çулçи хăмăр. Вĕрене, çăка, хурăн çулçисем сарă.

Кайăксем юрламаççĕ. Чакак, çерçи, ула такка. Ула курак, кăсăя, уйăп, кăвакарчăн кунтах хĕл каçаççĕ. Чĕр чунсем хĕле хатĕрленеççĕ. Пакша мăйăр тата кăмпа пуçтарать. Часах вăрман çаралать, хĕл ыйхине путать.(**Учитель вуласа парать**).

-Халĕ вара текстра йывăççен, кайăксен тата тискер чĕр чунсен ячĕсене аялтан туртатпăр. Тимлĕ пулăр: йывăç ячĕсене – **симĕспе**, кайăк ячĕсене – хĕрлĕпе, чĕр чун ячĕсене – кăвакпа (**ачасем ĕçлеççĕ**).

-Халĕ вара тĕрĕслетпĕр **(13-мĕш слайд).** Пĕр йăнăш та çук пулсан-«5», 1- йăнăш пулсан- «4», 2-3 е ытларах йăнăш пулсан –«3» паллă лартатпăр.

-Камăн пĕр йăнăш та пулмарĕ? Алă çĕклĕр-ха.

-Камăн 1 йăнăш?

**12. Урока пĕтĕмлетни**.

-Ачасем, эпир паян урокра мĕн çинчен калаçрăмăр? Урок пуçламăшĕнче лартнă тĕллевсене пурнăçларăмăр-и?(вăрман вăл мĕн ĕлĕкрен чăвашсене хăтлăх панă, çимĕç панă).

-Сире паян урок килĕшрĕ-и?

-Эсир паян урокра пурте маттур ĕçлерĕр. Сирĕнпе эпĕ кăмăллă. Халĕ хăвăр ĕçе хаклама ыйтатăп. (**Ачасем хут листисем çине паллăсем лартаççĕ).**

-Миша, эсĕ хăвна мĕнле паллă лартрăн? Маттур!

**13. Киле ĕç (14-мĕш слайд)**

**Суйлавлă киле ĕç:**

1.Хĕл каçма юлакан кайăксем çинчен каласа парасси;

2.Кĕрхи вăрман çинчен каласа парасси.

**13. Сывпуллашни.**

-Ачасем, çакăнпа эпир паянхи урока вĕçлетпĕр. Эсир паян пурте маттур ĕçлерĕр. Эпĕ сире малашне те вĕренӳре çитĕнӳсем тума сунатăп. Маттур пулăр! Урок вĕçленчĕ. Сывă пулăр!

**Усă курнă литература:**


1. Антонова З.С. Чăваш сăмахĕ: тĕрлĕ чĕлхеллĕ шкулăн 3-мĕш класĕнче чăвашла вĕрентмелли кĕнеке|З.С. Антонова, В.И.Игнатьева, Ю.Д. Сергеев, Н.Н.Чернова.-Шупашкар, 2008.
2. Антонова З.С. Вырăс шкулĕсенче чăваш чĕлхи вĕрентмелли методика кăтартăвĕсем.3 класс|З.С.Антонова т.ыт.те.-Шупашкар, 2006.
3. Игнатьева В.И. Чăваш чĕлхи:вырăс шкулĕн пуçламăш класĕсен программи.Вырăс шкулĕн пуçламăш класĕсенче чăваш чĕлхи вĕрентмелли минимум. Вĕренекенсен пĕлĕвĕпе хăнăхăвĕсене тĕрĕслемелли тата хакламалли виçесем\| В.И.Игнатьева , Н.Н.Чернова, З.С.Антонова.-Шупашкар, 2008.